26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
11
ВЫРСАРНИКУН
141(6378 №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр.

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Комбайнсемпе тырă вырмалли машинăсене лайăх юсас пулать

Ялхуçалăх ĕçĕсен чи ответлă тапхăрĕ çывхарса килет. Тыр пулăсене пурне те пĕр тăкмаласăр вăхăтра пухса кĕртмелле. Çакна пурнăçа кĕртес тесен, комбайнсемпе тырă вырмалли мĕн пур машинăсене вăхăтра, тĕплĕн юсамалла.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, пирĕн Чăваш республикинчи МТС-сен комбайнсемпе тырă вырмалли машинăсене юсас ĕçе июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ парти райкомĕсен секретарĕсене, МТС директорĕсене партипе правительство кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вырăнта конкретлă мерăсем йышăнма хушрĕ.

Çакна уйрăм районсен руководителĕсем тивĕçлипе ăнланса илмеç. Машинăсене юсас ĕçе вĕсем лайăх ертсе пымĕç. Элĕк, Ишлей, Шăхасан МТС-сем, графика çирĕп тăхăнса ĕçлесе, хăйсен пур комбайнĕсене те тĕплĕн юсаса лартрĕç. Анчах ĕç пур МТС-сенче те апла мар. Июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне комбайнсене юсамалли графика республикăри асăннă 4 МТС çеç пурнăçланă. Тата Елчĕк, Йĕпреç, Канаш машинно-тракторнăй станцийĕсене шута илмесĕр (вĕсем графика пурнăçласа пыраççĕ), республикăри ытти МТС-сенче вара комбайнсене юсас ĕç питех те япăх пырать.

Комбайнсене юсаса пĕтермелли срок тухасси тепĕр 4 кун çеç юлчĕ. Республикăра июлĕн 5-мĕшĕ тĕлне 174 комбайна çеç юсанă-ха. Ытти комбайнсем патне алă тымман. Тĕслĕхрен, Улатăр МТС-че 18 комбайн. Вĕсене пурне те юсас пулать. халĕхе кунта 5 комбайн çеç юсанă. Куславкка МТС-ĕнче те 11 комбайнран 5-шне çеç, Вăрмар МТС-нче 17 комбайнран 9-шне çеç юсанă.

Молотилкăсене юсас ĕç татах та япăхрах пырать. МТС-сенчи 392 молотилкăран 80-шне çеç юсанă.

Комбайнсемпе тырă вырмалли ытти машинăсене юсас ĕçе çакăн пек тăсса пыни пĕтĕм уборка ĕçне пысăк хăрушлăх умне тăратать. Районсенчи партипе совет организацийĕсен, МТС-семпе колхоз руководителĕсен çав хăрушлăх çинчен аса илмелле, уборка машинисене юсас ĕçре халех, тĕпрен улшăну тумалла.

ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ йышăннă тăрăх, халĕ колхозсемпе МТС-сем тыр пулăсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕслӳ комиссийĕсен колхозсемпе МТС-сенче тырă вырмалли машинăсене, комбайнсемпе молотилкăсене мĕнле юсанине тĕплĕн пăхса тухмалла, палăрнă ситменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле, çак ĕçе пĕтĕм колхозниксене мобилизацилемелле.

Колхоз председателĕсен, МТС директорĕсен тата партин колхозсемпе МТС-сенчи пуçламăш организацийĕсен мĕн пур пек машинăсене ĕçе кăларма тĕплĕн хатĕрлесе çитермесĕр çак ĕçрен хăйсен куçне вĕçертмелле мар. Кашни комбайн ĕçре çирĕп пултăр, тырă тăкмаласситтен сыхлама кашни комбайнпа жнейка çумне зерноуловительсем лартмалла. Куславкка МТС-ĕнче акă (директорĕ Лаврентьев юлташ) комбайна ĕçленĕ чухне çу сĕрсе пыракан майсем туман, 4 комбайн çумĕнче зерноуловительсем çук, комбайнпа ĕçлеме уйăрнă тракторсем юсавлă мар. Тĕрĕслӳ комиссийĕ çак ситменлĕхсене çеç мар, тата ыттисене те палăртрĕ. Анчах Лаврентьев юлташ комбайнсемпе молотилкăсене юсас ĕçре халĕ те кирлĕ улшăну тумасть.

Тыр пулăсене пухса кĕртме хатĕрленнине тĕрĕслекен комиссисем чылай колхозсенче жнейкăсемпе косилкăсене юсас ĕç те юлса пынине, тырра кăçал ытларах сурлапа вырма шутланине палăртрĕç. Колхоз председателĕсен çав ситменлĕхсене сак кунсенчех пĕтермелле.

Кашни жнейкăна молотилкăна уборкăн малтанхи кунĕсенчех ĕçе яма тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле. МТС руководителĕсен, колхоз председателĕсен комбайнсемпе вырса пухмалли участоксене уйăрса çирĕплетмелле, комбайн агрегачĕсене кирлĕ таран çынсем парса комплектламалла. Кашни жнейкăпа лобогрейка малтанхи кунран пуçласах ялан ĕçре пултăр. Ăнăçлă пулнă тыр пула машинăсемпе пĕр тăкмаласăр хăвăрт пухса кĕртер, çĕршывпа фронт валли тыр пул ытлăн çитлĕн пухса парар.

10 тонна кăмрăк перекетленĕ

КАНАШ. Старши машинист Петрук юлташ илсе çӳрекен паровоз ялан пĕр чăрмавсăр ĕçлет. Икĕ уйăх ĕнтĕ паровоз нимĕнле ремонтра та пулман. Кирек мĕнле задание те пурнăçлама хатĕр. Май тата июнь уйăхĕсенче Петрук юлташ 10 тонна кăмрăк перекетленĕ.

(«Вагонник» хаçатран).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем ОРЕЛПА КУРСК тата БЕЛГОРОД енĕсенче тăшман пехотипе танкĕсен мала яла тапăнса килекен пысăк вăйĕсене хирĕç çапăçнă. Пирĕн сывлăшри вăйсем тăшманăн нумай йышлă авиацийĕпе кун каçиччен çапăçнă. Пирĕн авиаци, хамăрăн войскăсене тăшман авиаци тапăннинчен хӳтĕлесе тăрса, унăн тапăнса килекен войскисен боевой йĕркисене штурмласа тата бомбăсем пăрахса хăватлăн пыра-пыра çапнă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 193 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери тăшманăн 94 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆

Орелпа Курск енче тăшман 4 кун хушши тапăнса пырса танксемпе чăрĕ вăй тĕлĕшĕнчен йывăр çухатусем тӳснĕ, анчах ăнăçу тăвайман. Паян ирхине гитлеровецсем фронтăн юнашарти участокне пырса çапнă. Хăйĕн хавшанă соединенийĕсене пĕр пехотнăй тата тепĕр танковăй дивизипе вăйлатса, нимĕçсем пирĕн позицисене ирхинех темиçе хутчен хаяррăн атакăланă. Вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă, час-часах ал вĕççĕн тăрса çапăçнă. Гитлеровецсен пур атакисене те пирĕн войскăсем сирсе пăрахнă.

Орелпа Курск енчи тепĕр участокра пĕр соединенири боецсем тăшман танкĕсемпе пехоти авиаципе пысăк вăйĕсем пулăшса тăнипе тунă 13 атакăна сирсе пăрахнă. Хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăрса, пирĕн чаçсем çав участокра 1.500 ытла гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ тата нимĕçсен 34 танкне пĕтерсе тăкнă. Пĕр высота районĕнче нимĕç пехотин батальонĕ литовецсен пĕр чаçĕн позицийĕсем çине пырса кĕнĕ. Алă вĕççĕн хаяр тытăçу пуçланса кайнă. Пирĕн подразделенисем, лейтенант Кавалюнас юлташ командир пулса ертсе пынипе, нимĕçсене сирсе пăрахнă, унтан контратака туса тăшманăн батальонне сапаласа янă, батальонăн пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Старши сержант Закоржаев юлташăн орудин расчечĕ нимĕçсен «Тигр» йышши 3 йывăр танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Белгород енче пирĕн танкистсемпе артиллеристсем тата пехотинецсем тăшманăн танкĕсемпе, пирĕн оборонăна савăлланса кĕнĕскерсемпе, çапăçнă. Нимĕçсем, епле пулсан та ăнăçу тăвас тесе, çапăçăва çĕнĕ резервсем кĕртсе яраççĕ. Пĕр соединенири танкистсем кун каçиччен пынă вăйлă çапăçусенче нимĕçсен 80 ытла танкне, 200 çити автомашинине, 5 бронетранспортерне, хăй тĕллĕн куçса çӳрекен темиçе орудине тата 2.000-ран кая мар гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Юнашарти участокра нимĕçсен пехотнăй дивизийĕ, 160 танк пулăшса пынипе, халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илме хăтланса, ирхине наступлени пуçласа янă. Пирĕн чаçсем кăнтăрла çитиччĕ тĕлелле нимĕçсен темиçе вунă танкне тата пĕр пине çити салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн пур йышши войскăсен боецĕсемпе командирĕсем те, хăйсен вăйĕсене хĕрхенмесĕр çапăçса, тăшман хĕснине сире-сире пăрахаççĕ. Силачерла Дмитриев лейтенантсен танковăй экипажĕсем, тăшман атакисене сирсе пырса, 3 кун хушшинче нимĕçсен 20 танкне ытла персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Лейтенант Золотаренко юлташ пулеметран тӳррĕн тĕллесе персе, 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Летчик старши лейтенант Гулаев юлташ сывлăшри хаяр çапăçусенче, пĕр кун хушшинче, нимĕçсен 2 бомбардировщикне тата 2 истребительне персе ӳкернĕ.

Кĕçĕн лейтенант Шлак юлташ тăшманăн 4 самолетне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен пиллĕкмĕш самолетне Шлак юлташ çав кунах тепĕр летчикпа пĕрле пулса персе антарнă. Пĕр соединенири летчиксем 2 кун хушшинче тăшманăн 77 самолетне персе ӳкернĕ, пирĕн хамăрăн пĕр машина пĕтнĕ, унăн пилочĕ парашютпа сăлăнса юлнă. Сывлăшри çапăçура кĕçĕн лейтенант Колосков юлташăн самолетне çĕмĕрнĕ пулнă. Летчик тăшман тылне анса ларнă. Нимĕç кавалеристсен отрячĕ пирĕн летчик анса ларнă вырăна ыткăннă. Анчах летчик Николаев юлташ, хăйĕн юлташне пулăшма васкаса, хăйĕн самолетне Колосковăн çĕмĕрĕлнĕ машинипе юнашар антарса лартнă. Сыхарса килекен гитлеровецсен куç умĕнчех пирĕн летчиксем сиенленнĕ самолета вут тивертнĕ те Николаев машини çине ларса иккĕшĕ те вĕçсе кайнă. Чапах вĕсем хамăрăн аэродром çине ăнăçлăн килсе ларнă.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 3 орудине пĕтерсе тăкнă, 5 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ. Совет летчикĕсем тăшманăн 60 çити автомашинине пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 20 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнелерехре пирĕн чаçсем тăшман çине артиллерирен персе тăнă. Артиллери пеннипе нимĕçсен миномет батарейине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн 8 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, боеприпассен 5 складне сирпĕнтерсе янă. Пĕр участокра нимĕç роти пирĕн позицисене разведка туса пĕлме хăтланнă. Пулеметсемпе минометсенчен персе гитлеровецсене пирĕн оборонăн малти хĕрри патне пынă чухнех сапаласа янă.

* *

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче Глазков майор командир пулса ертсе пыракан подразделени, артиллерирен вăйлăн персе тапăннă хыççăн, нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктне атакăланă. Пирĕн боецсем траншейăсене сĕмĕрсе кĕнĕ те гитлеровецсемпе ал вĕççĕн тăрса çапăçма тытăннă. Тĕреклетнĕ пункта тытса илсе, çав подразделенири боецсем нимĕçсен 120 çити салтакĕпе офицерне, 24 огневой точкине, танксене хирĕç пемелли 3 орудине, минометсен 2 батарейине тата 6 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

* * *

Партизансен Пожарский ячĕпе тăракан отрячĕ, Орел облаçĕн районĕсенчен пĕрингче кĕрешнĕскерсем, нимĕçсен халăх пурăнакан пĕр пунктра вырнаçнă гарнизонне çапса аркатнă. Партизансем нимĕçсен 50 салтакне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Партизансен ушкăнĕ 200 тонна горючи сыхланса тăракан склада сирпĕнтерсе янă. Партизан-подрывниксем нимĕçсен фронтална каякан поездне ӳпĕнтерсе янă. Паровоза, салтаксемпе офицерсем ларса пыракан 7 вагона тата зенитнăй орудисем тиенĕ 5 платформăна пĕтерсе тăкнă. Винтовкăсенчен хаярланса персе, партизансем нимĕçсен «Фокке-Вульф—189» йышши 2 самолетне çапса ӳкернĕ.

* * *

Орелпа Курск енче нимĕçсен 86-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен ушкăнне тыткăна илнĕ. Нимĕçсен 177-мĕш полкĕн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Баумгоф çапла каланă: «Хамăр наступлени тунин пĕрремĕш кунне эпĕ нихăçан та манмастăп. Çапăçуран чĕррĕн тухасси пирки манăн нимĕнле шанчăк та пулман. Пирĕн полк çавтери йывăр çухатусем тӳсрĕ. Дивизин ытти полкĕсем татах та ытларах сиен курчĕç. Вырăссен оборонине татса кĕме янă 216-мĕш полкра июлĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрла çитнĕ тĕлех салтаксен йышĕн виçĕ пайĕнчен иккĕ пайĕ пĕтнĕ, анчах полк нимĕнле ситĕнӳ те тăвайман. Полкăн юлашкийĕсене иккĕмĕш эшелона пуçарчĕç. Санитарсем аманнисене илсе тухса ĕлкĕреймесчĕç. Пĕр санитарнăй унтер-офицер мана: аманнисене сыхса ямалли пункт вылăх пусакан карттишне аса илтерет, тесе каларĕ».

Белгород енче июлĕн 6-мĕшĕнче тыткăна илнĕ нимĕçсен 320-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 587-мĕш полкран Хĕрлĕ Çар енне тарса каçнă салтаксем çапла каласа панă: «Наступлени малтанхи кунĕнчех 587-мĕш полкра салтаксем çурри ытла пĕтрĕç. 3-мĕш батальонра ротăсен пур командирĕсем те вилчĕç. 320-мĕш дивизин командирĕ генерал-майор Постель аманнă. Вăрçăра малтанхи кунсенчех пулнă ватă салтаксем çапла калаççĕ: халиччен тунă пĕр наступленире те нимĕç войскисем çак кунсенчи пек çухатусем тӳсмен, теççĕ».

Пирĕн авиаци тăшман войскисене пыра-пыра çапнă

Июлĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене кĕçекен авиаци Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче тăшманăн войскисемпе техникине татах пыра-пыра çапнă. Пирĕн летчиксем чугунçул станцийĕсемпе юхăнпывсем урлă касмалли вырăнсем патĕнче пуханса тăнă нимĕç пехотине, танксене тата автомашинăсене атакăланă. Бомбăсем пăрахнипе пула, тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ. Пирĕн самолетсем пурте хăйсен аэродромĕсем çине таврăннă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Вăрçă пуçлан нăранпах тăшманпа хаяррăн çапăçать летчик-штурмовик А. А. Егорова. Хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна икĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, тепре «За отвагу» медальпе наградăланă. **Ӳкерчĕк çинче:** кĕçĕн лейтенант А. А. Егорова.

В. ИВАНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Совет летчикĕсем тăшмана аркатаççĕ

БЕЛГОРОД ЕНĔ, июлĕн 8-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Белгород енче çапăçусем хаярлансах пыраççĕ. Çĕр çинче кăна мар, сывлăшра та вăйлă çапăçу пырать. Тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем тăвакан атакăсене совет воинĕсем çирĕппĕн тăрса сире-сире пăрахаççĕ.

Нимĕçсем пирĕн участока фронтăн ытти участокĕсенчен бомбардировщиксемпе истребительсен эскадрильисене илсе килнĕ. Пĕр хула районĕнче вырнаçса тăракан тăшман аэродромĕсене пирĕн авиаци вăйлăн пырса çапнă. Çĕр çинче 34 самолет пĕтерсе тăкнă.

Çĕр çинчи хамăрăн войскăсене пулăшса пырса, сталинла соколсем фашистсен танкĕсене çапа-çапа аркатаççĕ, автоколоннăсене, боеприпассен склачĕсене, тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе тăкаççĕ.

Сывлăшри çапăçусем лăпланма пĕлмеççĕ. Юлашки кунсенчен пĕринче сывлăшра 56 хутчен хаяр çапăçу пулса иртнĕ. Çав çапăçусенче пирĕн летчиксем тăшманăн вуншар самолетне персе ӳкернĕ.

Витрук юлташ командир пулса тăракан подразделенири пирĕн 6 штурмовик, 12 истребитель хӳтĕлесе пынипе, тăшман танкĕсен колоннине тапăннă, нимĕçсен 15 танкне стройран кăларнă. Çавăн хыççăн совет летчикĕсем тăшман бомбардировщикĕсемпе çапăçма тытăннă. Фашистсен 3 машинине штурмовиксем персе ӳкернĕ, 4-мĕш машинине вара истребительсем пĕтерсе тăкнă.

Минерсем тăшман çулне пӳлеççĕ

ОРЕЛПА КУРСК ЕНĔ, июлĕн 9-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Нимĕçсем хĕснине сирсе янă çĕрте пирĕн минерсем пысăк хастарлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Оборонăн малти хĕрринчен тулалла пуçа тухса, вĕсем тăшман танкĕсемпе салтакĕсем килес çулсем çине минăсем лартаççĕ. Тăшман орудийĕсемпе минометсенчен вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах, хăюллă воинсем тăшман патне темиçе метра çити çывхарса пыраççĕ те фашистсемшĕн вилĕм карти хываççĕ.

Пĕр гвардейски инженернăй часть минăсем лартса тухнă участок çине пырса кĕрсе, тăшманăн пĕр кун хушшинче кăна 32 танкĕ сирпĕнсе кайнă. Гварди красноармеецĕ Мурдинов нимĕçсен 30 автоматчикĕ ларса пыракан транспортерне пĕтерсе тăкнă. Нимĕç орудийĕсемпе миномечĕсем персе тăнă çĕртех Мурдинов минăсем вырнаçтарса лартнă.

Гварди сержанчĕ Соковых чи хĕрӳллĕ çапăçу вăхăтĕнче нимĕç танкĕсенчен темиçе утăмра кăна минăсене боевой взвод çине лартнă, йĕри-тавра тăкăнакан осколоксем çине вăл çаврăнса та пăхман.

Пĕр высота районне тăшман 100 танка çити кĕртсе янă. Вĕсем минăсем çине пырса тăрăннă та 15 танк çавăнтах çĕмĕрĕлнĕ. Ыттисем каялла çаврăннă.

Гвардеец-минерсен Нурутдинов юлташ ертсе пыракан ушкăнĕн, минăсем лартнă вырăна сыхласа тăракан кĕрĕт, тăшманпа ирĕксĕрех çапăçăва кĕме тивнĕ. Нимĕçсем минерсен витĕмлĕ пут-çулăмĕ айне лекнĕ. Анчах нимĕçсен 30—40 автоматчикĕ çапах та малалла çĕмĕрсе кĕме пултарнă. Вара Нурутдинов минер минăсене сирпĕнтерсе янă та автоматчиксен ушкăнне пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура гварди красноармеецĕ Сипачев минер танксене хирĕç пемелли пăшалпа персе тăшманăн наблюдательнăй пунктне пĕтерсе тăкнă тата пĕр транспортерне çĕмĕрнĕ.

Т. БАРАННИКОВ.

Фронтовиксем пурте ĕçре

ШĂХАСАН. Турн Сурăмри «Заря» колхозра фронтран таврăнакан колхозниксене çийĕнчех ĕçе вырнаçтараççĕ.

Малтанхи вăхăтра колхозри 4-мĕш бригада пур енĕпе те кая юлса пыратчĕ. Ку бригадăра лаша таврашĕсене йĕркеллĕ тытаймасчĕç, лашасене начар пăхатчĕç, уйхир ĕçĕсене вăхăтра ĕлкĕртсе пыраймасчĕç. Çакна шута илсе колхоз правленийĕ иртнĕ çуркунне ку бригадăна ертсе пыма фронтран аманса килнĕ Алексей Дмитриева уйăрса лартрĕ. Вăл малтанах бригадăри ситменлĕхсемпе вĕсем мĕнле сăлтавсенчен килнине тĕплĕн шута илсе тухрĕ, кайран вара вĕсем пирки ятарласах колхозниксене пухса каласрĕ. Кунта пĕрлех тата фронтра хăй курса илтнисем сиенĕн, нимĕç фашистĕсем пирĕн мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарни çинчен каласа кăтартрĕ. Çапла каласнă хыççăн бригадăра ĕçсем мĕн пирки кая юлса пынин сăлтавĕ те тупăнчĕ. Вăл— ĕçе тĕрĕс йĕркелеме пĕлменни тата колхозниксене вăхăтра ĕçкунĕсем парса пыманни пулнă. Малтан ĕçленĕ бригадир, чăнах та, ĕçкунĕсене пурне те пĕр пек тата нормативсене пăхса çырса пынă, е тата хăшпĕр ĕçсемшĕн колхозниксене ĕçкунĕсем вуçех те шутласа паман. Алексей Дмитриев çаксене шута илсе, уйрăмăнах колхозниксем хушшинчи ăнлантарулла ĕçе йĕркелеме тăрăшрĕ. Кашни колхозника уйрăм участок çумне çирĕплетрĕ, ĕçкунĕсене çийĕнчех шутласа пама пуçларĕ. Çапла ĕçлени вара колхозниксен кăмăлне, вĕсен ĕçлес хастарлăхне çийĕнчех ӳстерчĕ. 4-мĕш бригада çуракинче малти вырăна тухрĕ.

Халĕ ку бригада çум çумласа пĕтерчĕ, хĕрсех уборкăна хатĕрленет. Паянхи куна ку бригадăра çурласене шăлатса хунă, уборкăра кирлĕ машинăсене те юсаççĕ.

Çавăн пекех 1-мĕш бригадăра ĕçлеме те фронтран аманса килнĕ Петр Дмитриева уйăрчĕç. Вăл та хăй ĕçне тăрăшса тытăнчĕ, бригада пур ĕçе те вăхăтра ĕлкĕртсе пырать.

Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Петр Прокопьев ферма заведующийĕ пулса ĕçлет. Ферма государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ытлашшипех тултарнă. 1943 çулшăн государствăна аш-какай парса татнă. Тата çак кунсенче 13 пăру контрактациленĕ.

Фронтран аманса килекен колхозниксем колхозри пур тĕрлĕ ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Акă, вăрçă инвалидĕ М. Романов—ревизи комиссин председателĕ, Сергеев Иван—ревизи комисси членĕ, Никитин Григорий—завхоз пулса ĕçлеççĕ, вĕсем хăйсен ĕçне тăрăшса, юратса туса пыраççĕ.

Çак кунсенче тата вăрçă инвалидĕ Василий Окунев колхоз счетоводĕ пулса ĕçлеме тытăнчĕ. Фронтовиксем пур ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

С. АСЛАН.

Ача амăшĕсене панă пособи

Çак 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 1-мĕш числинчен государство нумай ачаллă хĕрарăмсене 370 миллион тенкĕ пособи панă.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕ Наркомместпром предприятийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Ăмăртура Канашри горпромкомбинат, Шупашкарти горпромкомбинат, Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕ мала тухнă тесе йышăнчĕ.

Канашри горпромкомбинат июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тата ширпотреб енĕпе 152 процент тултарнă, пилĕк тĕслĕ ассортиментпа продукци кăларма палăртнă плана та тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, продукци кăларассине 20 процент ӳстернĕ. Пĕрремĕш çурçулхи плана 90 процент ирттерсе тултарнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Сĕнтĕрвăрринчи райпромкомбинатран илсе Канашри горпромкомбината (управляющийĕ Шлапак юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ) памалла тунă, социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 15 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Шупашкар горпромкомбиначĕ июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 185 процент, ширпотреб енĕпе 179 процент тултарнă, май уйăхĕпе танлаштарсан, пĕтĕм продукци кăларассине 75 процент ӳстернĕ, пĕрремĕш çурçулхи плана 33 процент ирттерсе тултарнă.

Шупашкарти горпромкомбината (управляющийĕ Григорьев юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 10 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕ июнь уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци енĕпе 117,7 процент, ширпотреб енĕпе 137,2 процент, пĕрремĕш çурçулхи плана 34 процент ирттерсе тултарнă.

Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначне (управляющийĕ Титов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Маклашкин юлташ) социализмлă ăмăртура палăрнă работниксене премилеме 5 пин тенкĕ укçа памалла тунă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ июнь уйăхĕнче Ишлей, Сĕнтĕр, Шăхасан райпромкомбиначĕсем тата Улатăрти горпромкомбинат лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Куншăр пусне Совнарком Çĕмĕрле, Куславкка, Первомайски райпромкомбиначĕсем ассортимент енĕпе плана тултарса пырайманнине кăтартса хăварчĕ. Йĕпреç, Красноармейски, Шăмăршă, Етĕрне тата Елчĕк райпромкомбиначĕсем плана июнь уйăхĕнче пихăш енĕпе те тултарайманнине палăртрĕ.

Вырăнти топливо промышленность управленийĕн предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ вырăнти топливо хатĕрлес тата турттарас енĕпе пыракан социализмлă ăмăртăвăн 1943 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухрĕ. Ăмăртура Канашри леспромхоз, Çĕмĕрлери торфопредприяти, Вăрмарти леспромхоз тата вырăнти топливо промышленность управленийĕ кĕрекен Елчĕкри райлесзаг мала тухнă тесе йышăнчĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕмĕрлери торфопредприятинчен илсе Канашри леспромхоза (директорĕ Лопин юлташ, горсовет исполкомĕн председателĕ Белоусов юлташ) памалла тунă. Вăл 1943 çулхи июнь уйăхĕнче вутă хатĕрлес плана 113,3 процент тултарнă. Ĕçре палăрса тăракан рабочисемпе инженерла-техникăлла работниксене тата служащисене премилеме ăна 15 пин тенкĕ укçа памалла тунă. Леспромхоз директорне Лопина, горсовет исполкомĕн председательне Белоусов, горплан председательне Спирина юлташсене çав укçаран уйăхри ĕçукçи чухлĕ премилемелле тунă.

Ăмăртура уйрăмах палăрнă работниксене премилеме Çĕмĕрлери торфопредприятине (директорĕ Храмков юлташ, главнăй инженер Розов юлташ) 10 пин тенкĕ, Вăрмарти леспромхоза (директорĕ Баданов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Биктимиров юлташ) 5 пин тенкĕ, Елчĕкри райлесзага (директорĕ Кадышев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) 5 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Совнарком вырăнти топливо хатĕрлес тĕлĕшпе июнь уйăхĕнче Красноармейски, Кӳкеç, Хĕрлĕ Чутай, Октябрьски, Элĕк, Куславкка, Вăрнар, Сĕнтĕр, Пăрачкав, Советски райлесзагĕсем тата Гăвай, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри леспромхозĕсем лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Республика уйхирĕсенче

Комбайнсене тĕплĕн юсанă

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, июлĕн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Кĕнер МТС-ра тырпула пухса кĕртме комбайнсене мĕнле хатĕрленине комиссия пăхса тухрĕ. Кăçал çак МТС-ра 8 комбайн пулмалла. Вĕсем хăш колхозсенче мĕнле участоксене ĕçлесси палăрнă. Çичĕ комбайнран 5-шĕ ĕçе тухма хатĕр. Вĕсенче юсас ĕçсене пĕтерме çитменнине çывăх вăхăтра пĕтерме палăртнă.

Комбайнсене кунта тĕплĕн юсанă. МТС-ăн опытлă механикĕ Батыжин юлташ ĕçĕн пахалăхĕшĕн тăрăшать. Комбайнсен ĕçне лайăхлатма тĕлĕнтерме кунта çĕнĕлĕхсем те тунă. Тĕслĕхрен, комбайнăн эксцентрик сăнчăрĕ айне лаптăксем туса лартнă. Çавăнпа вара сăнчăр кунта тухмасăр ĕçлесе пыма пултарать.

Комбайн тырра вырса çапса пустарнă хыççăн пĕрлех тата çавăнтах жнейка пек ĕçлеме пултарать. Юсанă шурă комбайнсенче сăнчăрĕсене ĕçлени хăвăртрах çух çĕрте ывăнни пулмасть. Ку шутран ĕçсем тума майлаштарчĕç. 4 комбайн кăçал вĕсем хушшинче пур, кăçалхи кун ĕçлеççĕ.

Комбайн çапнисене тырă çухатмасăр тырпула тума, çавна кура, МТС-ăн юлашки икĕ комбайна та çак çитессине юсаса пĕтерме.

Молотилкăсене юсас ĕç те хăвăрт пырать. 10 молотилкăран халĕ 6-шне ĕç юсанă.

Н. КОНДАКОВ.

Мухтанма çĕрте ĕçсем чаплах мар

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ Ямашри «Ударник» колхоза июлĕн 6-мĕшĕнче тырă вырма тухма хатĕрленсе çитнĕ тесе шутларĕçĕ. Мухтасе те хăпартса Е. Филиппова. Анчах «Ударник» колхозăн председателĕ Е. Филиппова асăрханарах ĕçлени кирлĕ. Мĕншĕн тесен вăл хăйшĕн чухне ĕçе мухтаса кăтартать. Ака фактсем. Июлĕн 1-мĕшĕнче Филиппова юлташ районне райисполкома тырă вырма тухма хатĕрленсе çитрĕмĕр, тесе пĕлтерчĕ. Тĕшне илсен, тыр-пул тухма «Ударник» колхоз хатĕр мар.

Кĕрне вăтам хатĕрленсе, тесе сырнă. «Ударник» — пысăк колхоз. Кунта 6 бригада, 96 лаша, виçĕ жнейка. Уйăхра кулли 200 çын ытла ĕçлемелле. Колхоз тырпул пухса кĕртмелли плана туман. Кам ăçта ĕçлессине палăртман.

Вăрçă жнейкăсем пĕрле те халĕ тухма пултараймаççĕ. Пĕр жнейкăна юсаман, ĕçсем пачах тытăнман.

Лашасене хĕлле сахалтан та 80 тонна ĕçтермелле. «Ударник» колхозăн халĕ кухна 36 урапа çеç, вĕсенчен 14-шĕ ĕçлеме юрамасть. Вĕрен çук. Кĕреплесем çавсене начар тунă, çурлисене шăллантарса пĕтермен.

Çапла тырпулсене пухса кĕртме пур çĕлле те тĕплĕн хатĕрленес вырăнне «Ударник» колхоз председателĕ халĕ мухтаса ларнипе вăхăта сая ярать.

В. ВЕСЕЛОВ.

Кирлĕ те ответлă ĕç

Кок-сагыз пăхса устерес тĕлĕшпе йăран хушшисене çемçетесси, унăн калчисене апат парасси тата ăна çумкурăксенчен тасатасси хальхи вăхăтра кирлĕ те ответлă ĕç пулса тăрать. Республикăри нумай колхозсем, вăйлă кок-сагыз туса илессишĕн кĕрешсе, агротехникăлла мероприятисене тимлĕн туса пыраççĕ. Чкаловский районĕн „Путь Ленина" колхоз (председателĕ Тарасов юлташ), „Сăлтăр" колхоз (председателĕ Баранов юлташ), Крупская ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Мефодьев), „Красное знамя" колхоз (председателĕ Пирогов), Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан, „Красная Армия", „Канаш" колхозсем, Тăвай районĕнчи „Трудовой путь", „Пламя" тата ытти колхозсем те кок-сагыз плантацийĕсене апат пăхса тăраççĕ. Çакăн пек колхозсем кок-сагыз тымарĕсемпе вăррисене кирлĕ пек илессине шанса тăма пулать.

Анчах та хăшпĕр районсенче кок-сагыз плантацийĕсене паянхи куна çитсе те кирлĕ пек пăхмаççĕ-ха, çумкурăксене те лайăх тасатса тăмаççĕ. Шăмăршă районĕнче йăран хушшисене кок-сагыз акнă çĕрĕн 42 процентне çинче кăна пĕремĕш хут çемçетсе тухнă. „Победа" колхоз (председателĕ Николаев юлташ), „Правда" тата ытти колхозсем кок-сагыз калчисене пăхассине, çум çумлассине çителĕклĕ туса пымаççĕ. Ку районра кок-сагыз калчисене пĕр хут та апат памаççĕ. Ку енĕпе Тăвай районĕнчи колхозсенче те ĕç начар тăрать. „Пĕтĕмĕшле илсен", Тăвай районĕнче йăран хушшисене кок-сагыз акнă çĕрĕн виççĕмĕш пайĕнче кăна çемçетнĕ-ха. Кок-сагыз калчисене апат памаççĕ. „Свободный путь" колхозра (председателĕ Поляков), „Новый путь" колхозра (председателĕ Ефремов) тата „8-ое марта" колхозра кок-сагыз плантацийĕсене исполкомпа райсовет исполкомĕпе райсовет пайĕ çав пĕлесçĕ пулин те, нимĕнле мерă те йышăнмаççĕ.

Канаш районĕнчи хăшпĕр колхозсенче те ку енĕпе ĕç начар пулса пырать.

Кок-сагыз плантацийĕсем çинчи ĕçе хăвăртрах та кĕске вăхăтра туса ирттерме тăрăшмалла. Йăран хушшисене çемçетмелли орудисене кирек хăш тимĕрçĕ те тума пултарать.

Икĕ çул каярах акнă кок-сагыз плантацийĕсем çинчи вăрăсене пухма тытăнмалла, çав вăхăтрах çак культура акнă лаптăка та 1,5 хут ўстерессине манмалла мар.

Кок-сагыз вăррисене пуçтарма çĕре аслă классенчи шкул ачисемпе пионерсене те явăçтармалла. Çак ĕçрех комсомол организацийĕсен те хăйсен енчен пулăшу парассине манмалла мар.

Кок-сагыз вăррисене пĕр пĕрчĕ юлмиччен пуçтармалла.

Агроном И. ЕРМОШЕНКО.

Чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пымалла

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесси—оборонăлла пысăк задача пулса тăрать. Июль уйăхĕнче пирĕн республика Хусан чугунçулĕ валли вутă хатĕрлесе пама пысăк задани илнĕ. Çав задание вăхăтра тата ăнăçлă пурнăçлани пирĕн республикăн ĕçченĕсенчен килет. Пĕлтĕр вутă хатĕрлес ĕçе уборка вăхăтĕнче пăрахса хăварнă. Кăçал çав практика пулмалла мар. Уборка вăхăтĕнче колхозсенче вутă хатĕрлекенсене хăйсен ĕçне пăрахма памалла мар. Вутă хатĕрлекенсене лайăх условисем туса памалла.

Пĕрремĕш çурçул вутă хатĕрлес плана Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Çĕрпӳ районĕсем тултарчĕç.

Вутă хатĕрлес ĕçе кая хăварма юрамасть. Хальхи вăхăтра пысăк та тарăн вутă хатĕрлес ĕçе кирлĕ пек ĕçлемен районсем те пур.

Республикăра чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçе Канаш, Куславкка, Красноармейски районĕсем начар туса пыраççĕ. Июль уйăхĕ çак ĕçе тата та вăйлатма ыйтать. Çавăнпа та çав районсенче ĕçлекенсем тырпула вăхăтра пухса кĕртессине пулмалла. Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлесе парас ĕçе вăйлатса пырса, чугунçула пысăк пахалăхлă вутă хатĕрлесе парар.

* * *

ШАХАСАН. Районра малта пыракан колхозсем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана ирттерсе тултарчĕç. «Красный пахарь», «Новый путь», «Акатуй» колхозсем вутă хатĕрлес ĕçĕн çурçулхи заданине 124—150 процент пурнăçларĕç. «Париж Коммуни», «Борец», «Майăн 1-мĕшĕ» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем те вутă хатĕрлесе турттарас графика пурнăçа кĕртрĕç.

Калинин ячĕпе тăракан колхозри Н. Михайлов, «Красный пахарь» колхозри И. Мушанов, В. Сидоров, Данилов, Иванов юлташсем задание 150—200 процент тултарса пычĕç. «Пионер» колхозран пынă С. Иванова юлташ ĕç нормине 160 процент тултарчĕ. Район июлĕн 7-мĕшĕ тĕлне чугунçул валли вутă хатĕрлес плана касас енĕпе 131 процент, турттарас енĕпе 124 процент пурнăçларĕ.

Шкул валли—вутă

СĔНТĔР. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкула кăçалхи вĕренӳ çулĕ валли 570 кубометр вутă хатĕрлемелле. Шкулти учительсемпе вĕренекен ачасем паянхи куна 533 кубометр вутă касса хатĕрлерĕç. Вутă хатĕрлес ĕçе çар ĕçне вĕрентекен В. Демидов, старши пионервожатăй П. Мурзаева юлташсем ертсе пыраççĕ. Норма тăрăх кашни вĕренекенĕн пĕр кунта 3,75 кубометр вутă касмалла пулсан, вĕсем 4-шар кубометр касаççĕ. Вутă хатĕрленĕ çĕрте вĕренекенсене леспромхоз работникĕсем пулăшу параççĕ. Яшкина Чирков юлташсем, сăмахран, вĕсен пăчкисемпе пуртисене хăйраса, çивĕчлетсе параççĕ.

Вăрманта ĕçлекенсем çак кунсенче шкула кирлĕ чухлĕ вутă хатĕрлесе çитереççĕ

Т. Чапалова, Е. Кваскова.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пирĕн парторганизацин ĕçĕсем

Партин Чубай ялсоветĕнчи (Вăрмар районĕ) пуçламĕш организацийĕ çамрăкха: ăна иртнĕ çулти октябрь уйăхĕнче çеç организациленĕ. Апла пулин те вăл ялсоветри колхозсен ĕçне лайăхлатас, ĕç дисциплинине çирĕплетес, фронтпа тăван çĕршыва ĕçлĕн пулăшса тăрас, ялсоветри обществăллă учрежденисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе паллă ĕçсем туса ирттерчĕ.

Организацире 9 коммунист: парти членĕсем—5 çын, кандидатсем—4 çын. Вĕсем пурте ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Парти членĕсем Григорьевпа Иевлева юлташсем колхозсен председателĕсем пулса, Мясникова юлташ тулли мар вăтам шкулăн директорĕ пулса ĕçлеççĕ. Çавăн пекех парти членĕн кандидачĕсем Мурашова, Тимофеев, Мясников, Яковлев юлташсем те ответлă ĕçсенче ĕçлеççĕ.

«Дружба» колхоз çулран-çулах юлса пыракан колхозсен шутĕнче тăнă. Ăна парти членĕ И. Григорьев юлташ ертсе пыма тытăнсан, ĕç самаях лайăхланчĕ. Ялта партин пуçламĕш организацине тăвиччен «Дружба» колхозăн ĕне выльăхсем 8 пуç, 30 сурăх, 60 сысна çеç пулнă. Халĕ ĕне выльăхсем 80 пуçа çитрĕç, сурăхсемпе качакасем 217 пуç, сыснасем 100 пуç ытла шутланаççĕ.

Пирĕн колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри тĕп чăрмав—витесем пулманни пулнă. Парторганизаци ку чăрмава пĕтерессишĕн çине тăрса кĕрешрĕ, колхоз часах 100 ĕне, 200 сурăх вырнаçмалăх çĕнĕ витесем турĕ, пăрусемпе пӳтексем, чăх-чĕп валли те витесем çĕнĕрен лартрĕ. Куппа пĕрлех сушилка, 5 амбар, 4 овощехранилище çĕнĕрен турĕ.

Колхоз государствăна тырă, пахча-çимĕç, сĕт-çу, çăмарта памалли обязательствăсене çулран çулах пурнăçласа пыман. Çапла вара 1942 çулхи кĕркунне колхозăн государствăна иртнĕ çулсенчи парăмсемшĕн 600 центнер ытла тырă памалла пулчĕ. Хальхи вăхăтра государствăна тырă памалли обязательствăсене, натуроплата тата Хĕрлĕ Çар фондне тырă памалли плансене пĕтĕмĕшпех тултарнă, иртнĕ çулсенчи парăмсене те татнă. Ку ĕçре парторганизаци пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Иртнĕ çул халичченхинчен тухăçлăрах тырпул туса илнĕ, колхозниксене кашни ĕçкунĕ пуçне 1,5-шер килограмм тырă валеçсе панă.

«Дружба» колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн те çине тăрсах кĕрешрĕ. 143 гектар калчисене тислĕк шывĕпе тата минераллă удобренисемпе апат панă, уя 2.000 лав ытла тислĕк кăларнă. Тырпулсене çумкурăкĕнчен тасатсах тăратпăр.

Парторганизаци колхозсенче ĕç дисциплинине çирĕплетес енĕпе уйрăмах паллă ĕçсем туса ирттерчĕ. Ĕç дисциплинине пăсакансен хисепĕ сахалланса пырать.

Ĕçе шута илессине тĕрĕс йĕркелени дисциплинăна çирĕплетме чылай пулăшрĕ. Ку тĕлĕшпе пирĕн çитменлĕхсем те пур-ха: хăшпĕр колхозниксен ĕç кĕнекисем çук, ĕçшĕн хушса тӳлемелли закона пурнăçлама тытăнман.

Коммунистсем колхоз производствинче лайăх ĕçлесе ыттисене пример кăтартаççĕ. Вăрçă инвалидĕ, парти членĕн кандидачĕ А. Петров юлташ кăçал 80 ĕçкунĕ тунă.

Парторганизаци социализмлă ăмăртăва организацилесе ертсе пырать. Ялсоветри «Дружба» тата «Заря» колхозсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ку колхозсем хушшинче ытех те пысăк уйрăмлăх пур. «Дружба» колхозăн акăнакан çĕр лаптăкĕ «Заря» колхозăнниччен 3 хута яхăн пысăкрах. «Дружба» колхоз членĕсем, «Заря» колхоз колхозникĕсенчен юлас мар тесе, çуракинче мухтава тивĕç ĕçлерĕç. А. Кирюш юлташ ертсе пыракан бригада малти вырăна тухрĕ. Çуракинче социализмлă ăмăртăва «Заря» колхозра уйрăмах лайăх организациленĕ. Колхозăн кăтарту хăми çинче кулленех ăмăрту результачĕсене курма май пулнă. Агитаторсем малта пыракансен опытне ыттисем хушшинче сарнă.

Ăмăрту пулăшнипе «Заря» колхоз çуракине районра чи малтан—планпа палăртнă срокран икĕ кун çурă маларах вĕçлерĕ. Планран ирттерсе 11 гектар тырă акса хăварнă. «Дружба» колхоз та çуракине планпа палăртнă срокра туса ирттерчĕ.

Эпир хĕрарăмсене ертсе пырас ĕçсене хăюллăнах уйăрса лартатпăр. Пирĕн колхозсенче уйĕç бригадисен бригадирĕсем пулса 5 хĕрарăм, звеньевойсем пулса 18 хĕрарăм ĕçлеççĕ, фермăсенче те хĕрарăмсемех ĕçлеççĕ.

Эпир комсомол организацийĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн те çине тăрса ĕçлетпĕр. Ялсоветра комсомолăн виçĕ организацийĕ пур: колхозсенче тата тулли мар вăтам шкулта. Вĕсенче пурĕ 38 комсомолец. Кăçал комсомол ретне çĕнĕрен 27 çамрăка илнĕ. Анчах комсомолăн «Дружба» колхозри, тулли мар вăтам шкулти организацийĕсем çителĕксĕр ӳсеççĕ-ха.

Коммунистсемпе комсомолецсен политика тĕлĕшĕнчи пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе те парторганизаци хăшпĕр ĕçсене тунă. Парти историне вĕренекенсене пулăшас шутпа кăçал 3 консультаци ирттернĕ.

Агитколлектив ĕçне те лайăхрах ертсе пыма пуçларăмăр. Агитколлектив руководителĕ—тулли мар вăтам шкул директорĕ А. Мясникова юлташ вăрçă куннĕсенче вуншар агитатор вĕрентсе çитĕнтерчĕ. Агитколлективра халĕ 29 агитатор.

Анчах парторганизацин çитменлĕхсем те пур-ха. Кăçалхи 5 уйăх хушшинче парти членне 2 çынна куçарнă, парти членĕн кандидачĕсен ретне 2 çынна çеç илнĕ. Партие илес ĕç уйрăмах «Дружба» колхозра тивĕçлипе пулса пымасть. Колхозра партие илме тивĕçлĕ çынсем чылай. Малашне эпир ку ĕçе тĕпрен лайăхлатассишĕн кĕрешетпĕр.

Халĕ пирĕн умра пысăк та ответлă ĕçсем тăраççĕ. Пирĕн тырпулсене пĕр тăкаксăр, кĕске срокра пухса кĕртмелле. Сталин юлташ: «Тырпулсене пухса кĕртесси вăл—сезонра тумалли ĕç, вăл кĕтсе тăма юратмасть. Вăхăтра пухса кĕртрĕн—туянтăн, кая юлса пухса кĕртрĕн—çухатрăн», тесе кăтартса панине пирĕн коммунистсемпе комсомолецсем лайăх ăнланаççĕ. Эпир уборкăна кăтартуллăн хатĕрленсе çитессишĕн тата ăна ăнăçлăн ирттерессишĕн çине тăрсах кĕрешетпĕр.

В. ТИМОФЕЕВ,
Пуçламĕш парторганизацин секретарĕ.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен войскисем Сицили утравĕ çине анма пуçланă

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: союзниксен Эйзенхауер генерал ертсе пыракан хĕçпăшаллă вăйĕсем июлĕн 10-мĕшĕнче ирхине ирех Сицили утравĕ çине тухса анма пуçланă.

Алжирти радио çапла пĕлтернĕ: союзниксен войскисем лайăх çанталăкра тухса аннă, Германипе Итали авиацийĕ питĕ хаярран хирĕç тăрать.

Союзниксен войскисем Сицили утравĕн хĕвелтанăç пайĕнчи сăрт-тулла вырăнсене аннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен бомбардировщикĕсем Кельн хулине 119-мĕш хут çав тери хаяррăн тапăннă. Çавăнпа пĕрлех истребительнăй авиаци тăшманăн Францири тата çурçĕр-хĕвеланăç Германири аэродромĕсемпе чугунçул объекчĕсене атакăланă.

Вăтаçĕр тинĕс бассейнĕнче июлĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата ĕнер кăнтăрла союзниксен бомбардировщикĕсем çаплах Сицили утравне пыра-пыра тапăннă. Çĕр çинче тата сывлăшри çапăçусенче тăшман самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă.

Болоньери çар заводĕнче забастовка пуçланнă

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Болоньери çар завочĕсенчен пĕринче (Çурçĕр Италири) забастовка пуçланса кайнă. Рабочисем ĕçе тытăнма килĕшмесĕр çирĕппĕн тăраççĕ

ИТАЛИ ФАШИСЧĔСЕН ПАРТИЙĔН ЙЫШĔ ЧАКСАХ ПЫРАТЬ

ЛОНДОН, июлĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Итали фашисчĕсен партийĕнче çынсем хăраса ӳксе пăтранса кайнă. Ку партирен членсем хăйсен ирĕкĕпе мăссăллăн тухаççĕ тата нумайĕшне çак сăлтавсем пирки кăлараççĕ: «фашист тивĕçлĕхĕнчен пăрăнса кайнăшăн», «сĕнтерĕве ĕненменшĕн», «пораженилле шухăш-кăмăлсемшĕн» т. ыт. те.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Итали фашисчĕсен партийĕн секретарĕ Скорца çапла каланă: юлашки çул хушшинче фашистсен партийĕнчи арçынсен хисепĕ 300.000 çын таран чакнă.

ЖИРО ГЕНЕРАЛ ВАШИНГТОНА ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Жиро генерал Вашингтона çитни çинчен пĕлтерет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пирĕн землякосем

Юн витнĕ комсомол билечĕ

Пăхма вăл—тӳлек те лăпкă çын. Калаçасса та темĕнле именерех, шăппăн калаçать. Анчах гитлеровецсем çинчен асăнсан, унăн йăвашшăн пăхакан хура куçĕсенче сасартăк кăвар курăнса каять.

— Чун тарăхать,—тет вăл шăл витĕр тухакан сасăпа.—Вĕт, çав ирсĕрсене нимĕнле тискер кайăкпа та танлаштарма çук... Нимĕç вăл этем те мар, кашкăр та мар, темĕнле урса кайнă тискер чĕрчун.

Вара Евстафий Григорьев çав урнă ытăсене хирĕç арăслансем пек паттăррăн çапăçакан хăйĕн юлташĕсем çинчен каласа пама тытăнать. Ун каланĕнчен куç умне украинец Проваленкопа пушкăрт Аскаров командирсем, Дудаков, Панченко, Соловьев, Иванов боецсен геройла сăнарĕсем тухса тăраççĕ.

— Çавăн пек юлташсемпе нимĕнле инкекре те пĕтместĕн. Вĕсем тăшманăн чуппе шĕтĕм пырпи-пакартипех туртса кăлараççĕ,—тет вăл шухăшĕсене пĕтĕçтерсе.

— Эсир хăвăр çинчен каласа парăрха. Акă сирĕн орден пур...

— Калассимĕнĕ... Хăйпа ху мухтанă пек пулать. Лайăх çапăçнă пулсан, çынсем мухтаççăр.

Вăл вара гимнастеркка кăсьинчен лайăх типтерлесе чиксе хут тĕрке кăларать.

— Çакăнта темскер пулмалла-ха... Пăхкаласа тухăр.

Акă сирĕн алăра фронтра тухакан «Во славу Родины» хаçатăн лăчĕркенсе пĕтнĕ, сарăхса кайнă листисем. Анчах çапах та эсир çав хут татăкĕсем çине

мар, Григорьевăн аллинчех юлнă пĕчĕкçĕ кĕнеке çине пăхатăр. Çав кĕнеке питĕнче аслă Ленин сăнĕ. Кĕнекен пĕр хĕрри çуралса, чĕрпĕнсе кайнă. Эсир ун çине шитех те танкерсе пăхнине Григорьев асăрхать. Вăл вара сирĕн кăмăлăра туйса илсе:

— Ку ман комсомол билечĕ, — тет. Унтан вăл ăна ерипен уçса кăтартать. Комсомол билечĕ пĕр хĕрринчен таталаннă çеç мар, ун ăшĕнче юн пĕвенсе хытса ларнă. Ку вăл паттăр комсомолец Григорьевăн юнĕ...

Хастар артиллерист-разведчик кĕçĕн лейтенант Евстафий Григорьев тăшманăн вут йăвисене ялан ывăнма пĕлмесĕр шыранă. Тăшман йăвисем патне мĕнле те пулин çывăхарах шăвăнса пырса, вăл пĕр-пĕр тĕмеске е тунката хыçне пытаннă та нимĕç йыттисем—белофинсем ăçта мĕн тунине кунĕ-кунĕпех сăнаса ларнă. Хăш чухне унăн вырăнĕ çуллĕ йывăç тăррине пулнă. Нимĕнле çанталăк та унăн хастарлăхне хавшатма пултараймаç. Белофинсем енчен ăçта та пулин пулемет шатăртатса илет-и, е тупă кĕрслетерет, Григорьев ăна хăйĕн стереотрубине çийĕнчех хыпашласа тупать те, картса хурать. Нумай та вăхăт иртмест, пирĕн артиллеристсем тăшманăн вут йăвисене сывлăшалла сирпĕнтереççĕ. Снарядсем пĕрре те ахаль сая каймаççĕ.

Хăйĕн артиллерист тусĕсене татах та лайăхрах пулăшас тесе, Григорьев хамăрăн пехотинецсемпе пĕрле те разведкăна сахал мар çӳренĕ.

Пирĕннисем белофинсенчен малтанхи кун тытса илнĕ траншейăра ларса, вăл хамăрăн батарейăна ăçта пемеллине кăтартса тăнă çеç мар, боецсен пысăк мар ушкăнĕпе белофинсен 12 атакине сире-сире пăрахнă.

Каç пулсан, шюцкоровецсен ушкăнĕ хăйсен траншейине каялла таварма шут тытнă. Çав урнă йытăсем траншейăна çĕмĕрсе кĕрсен, Григорьев тăшмансене хирĕç чăн малтан сиксе тăрать. Аякран систермесĕр чупса пыма хăтланакан белофина вăл пистолетран тӳрех персе ӳкерет. Анчах хыçран шăвăнса пынă тепĕр бандичĕ кĕçĕн лейтенанта çĕçĕпе чикме хăтланать. Григорьев каялла çавăрăнать те ун çине çĕçĕ йăтнă тискер кайăк пуçне пульăпа пăталаса хурать.

Хастар командира ытти белофинсем асăрхаса илеççĕ. Вĕсем пурте ун çине сиксе ӳкеççĕ. Григорьев кунта татах икĕ шюцкоровеца персе ӳкерет, виççĕмĕшне граната ывăтса таткаласа тăкать.

Траншейăна çĕмĕрсе кĕнĕ бандитсенчен пĕри те каялла чĕррĕн тухса каяймасть. Пирĕн боецсем, хăйсен командирĕн паттăрлăхĕпе хавхаланнăскерсем, белофинсене пурне те вĕлерсе пĕтереççĕ.

Хăйсен ĕçĕ ăнăçлă пулманнипе тарăхса, белофинсем ир енелле траншея çине вăйлăн пеме тытăнаççĕ. Тăшман снарячĕн ванчăкĕ гимнастеркăн сулахай кăсьинчи комсомол билетне çурса Григорьевăн ӳпкине кĕрет. Анчах Григорьев йывăр аманнă пулсан та, хамăрăн батарейăна ăçта пемеллине юлашки вăйне пухса кăтартса парать. «Вилĕм лапамĕнчен» чăваш халăхĕн паттăр ывăлне вырăс халăхĕн ывăлĕ Дудаков боец йăтса тухать. Пушкăрт халăхĕн ывăлĕ Аскаров, чи хаклă тăван пек, унăн суранĕсене типтерлесе çыхса, ăна госпитале ăсатать.

Правительство кĕçĕн лейтенант Евстафий Григорьевич Григорьевăн паттăр ĕçне пысăк хисепе хурса, ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Григорьев—хаяр çын мар. Вăл Иш-лей районĕнчи Турикасси ятлă пĕчĕкçĕ те лăпкă ялта, чухăн çын çемьинче çуралса, пуян çынсем патĕнче ĕçлесе ӳсĕ. Вăрçăччен ĕçĕ те унăн Чăвашпотребсоюз системинчи мирлĕ ĕç пулнă. Вăл, комсомолец, хăй пек ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн тăрăшнă. Анчах пирĕн юратнă тăван çĕршыв çине ултавлă та ирсĕр тăшман тапăнса кĕрсен, унăн чĕринче аçа-çиçĕм пек хаярлăх çĕкленнĕ. Комсомолец Григорьев тăшманшăн хаяр çын пулса тăнă.

Григорьев юлташ тăракан соединени командирĕ— генерал-майор пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа хастар воинăн арăмĕ патне—Клавдия Петровна Григорьева патне, Шупашкара, салам янă.

«Пирĕн часра тăшмана хирĕç сирĕн мăшăрăр Евстафий Григорьевич çапăçать. Вăл хăй сирĕн те паттăр воин пулнине, хамăрăн тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн юратнине, унăн ирĕклĕхĕпе чыслăхне юлашки юн тумламĕ юлмиччен хӳтĕлеме хатĕр тăнине кăтартса пачĕ.

Пирĕн часри боецсемпе командирсем сирĕн упăшкăрпа—аслă совет çĕршывне чаплăн хӳтĕлекен паттăрпа тивĕçлипех мухтанаççĕ», тесе çырать генерал.

Çавăн пекех хĕрӳллĕ çырусем çырса тăрать пушкăрт ывăлĕ Аскаров та. Вăл çырусем фронтпа тыл хушшинчи туслăха çирĕплетеççĕ.

...Снаряд ванчăкĕпе таткаланнă, вĕри юн витнĕ комсомол билетне Григорьев юлташ татах чĕре çинчи кăсьине типтерлĕн майлаштарса чикет. Çапăçу кунĕ витĕр тухнă пĕчĕк кĕнеке питĕнче аслă Ленин сăнĕ. Кунта татах та татах хамăрăн юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ каланă сăмахсене аса илетĕн:

— Сире аслă Ленин хăвачĕ çапăçура хавхалантарса пытăр!

Аркадий ЭСХЕЛЬ.

ГОСУДАРСТВĂН ХУСАНТИ СТОМАТОЛОГИ ИНСТИТУЧĔ

1943-44 вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн 1-мĕш курса студентсем илесси çинчен пĕлтерет.

Институтра 4 çул вĕренмелле.

Институт стоматолог-врачсене, тута, шăл, чĕлхе тата янахпа пит чирĕсен специалисчĕсене хатĕрлет.

Института вăтам шкултан вĕренсе тухнă çамрăксене, 17 çултан пуçласа 35 çула çитнисене илеççĕ.

Заявленисене июлĕн 31-мĕшĕччен илеççĕ.

Заявленипе перле çак документсене памалла: 1) тĕплĕ автобиографи, 2) вăтам шкул пĕтерни çинчен подлиннăй аттестат, 3) виçĕ фотокарточка (пуçа тăхăнмасăр ӳкермелле, пысăкăшĕ 3-4 см. пулмалла, кашни карточки çинех хăйĕн алă пусмалла, алă пуснипе государство учрежденийĕ ĕнентерсе памалла), 4) çар обязанноçĕ тĕлĕшĕнчен мĕнлине пĕлтерекен справка (военнообязаннăйсем валли), 5) паспорт (ăна заявленипе пĕрле ямалла мар, вĕренме пырсан кашни хăй кăтартать).

Вăтам шкула 1941, 1942 тата 1943-мĕш çулта „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе пĕтернисене испытанисемсĕрех илеççĕ. Вăтам шкул пĕтернĕ ытти çамрăксене вырăн юлсан кăна испытанисĕр илеççĕ. Кĕрес текен çавăн пек çамрăксем илмелличчен ытларах пулсан, çак предметсемпе испытани пулать: вырăс чĕлхипе литература (сăмахпа каласа парса тата çырса та), физика тата хими.

Испытанисем август уйăхĕн 15—25-мĕшĕсенче пулаççĕ.

Институтăн студентсем валли общежити тата столовăй пур.

Заявленисене çак адреспа ямалла: г. Казань, ул. Бутлерова, 16. Стоматологический Институт. Телефон 10—39.

Шупашкар больницине санитаркăсем дворниксем, кĕпе-йĕм çăвакансем тата çĕвĕ çĕлекенсем кирлĕ.

Шупашкарти тарасасем юсакан завод шут ĕçне пĕлекен работниксем хатĕрлеме вĕренекенсем илесси çинчен пĕлтерет. 3 уйăх вĕренмелле пулать.

Заявленисене ирхине 8 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 5 сехетчен илеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, хули, Ворошилов урамĕ, 46 мĕш номерлĕ çурт. Телефон 0-48, виçĕ звонок.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Н. Г. 189 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.